28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
18
ЮНКУН
137(6888) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

IV.
ТĔШТЫРАПА СУ ТУМАЛЛИ КУЛЬТУРАСЕМ ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур партипе совет, хатĕрлевпе çĕрĕç органĕсене, МТС-семпе совхозсене тата колхозсене çакна асра тытма хушаççĕ: мирлĕ строительство тапхăрне тата халăх хуçалăхĕнче вăрçă юлашкийĕсене пĕтерес тапхăра кĕнĕ чухне çĕршыв валли продовольствипе чĕртавар тата, пуринчен малтан, тырпул парса тăрасси хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи чи паха задачăсенчен пĕри пулса тăрать, çав задачăна ăнăçлăн татса панинчен промышленноçпа транспорта, хуласемпе ялсене, немĕç захватчикĕсем ишĕлтерсе хăварнăскерсене, хăвăртрах юсаса ура çине тăратасси, халăх пурнăçне пур енĕпе те лайăхлатасси тата хамăр Тăван çĕршывăн хăватне малалла тĕреклетсе пырасси килет.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ партипе совет, хатĕрлевпе çĕрĕç органĕсене 1945 çулта тырпулпа пытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе çапла организацилеме хушаççĕ: мĕнпур ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана кашни район тăрăх, кашни колхозпа совхоз тăрăх закон кăтартса панă сроксенче пĕр сăмахсăрах тултаркалла.

2. Парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли обязательствăсене колхозсен аллине хăвăртрах парас тата колхозсенчи тырпул тухăçне разрядсем тăрăх уйăрса тухас ĕçре Наркомзагăн уполномоченнийĕсене тата хатĕрлев органĕсене тивĕçлĕ пулăшу пама хушас; çавăнпа та хатĕрлев органĕсен аллине вăхăтлăха ĕçлеме тĕрĕсленĕ работниксем кирлĕ таран памалла, çакăнпа пĕрлех государствăна хирĕçле кирек мĕнле ĕçе те —колхозсенчи тырпул тухăçлăхне пĕчĕклетсе кăтартма, çапла вара натуроплата виçине юриех чакарса кăтартма хăтланнисене пĕтерсе пымалла.

3. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне колхозсенчи тырпул тухăçне разрядсем тăрăх уйăрни çинчен калакан пĕлтерĕве МТС директорĕсен аллине вăхăтра, анчах уборка пуçланнă хыççăн 15 кунран кая юлмасăр пама хушас. МТС директорĕсене вара—колхозсенчи тырă тухăçне разрядсем тăрăх уйăрни çинчен калакан пĕлтерĕве Уполнаркомзагран илнĕ хыççăн 5 кунлăх срокран кая юлмасăр, колхозсен аллине МТС ĕçленĕшĕн счетсем пама хушас, вырнăшăн, комбайнпа тырă вырса пуçтарнăшăн, аван çапнăшăн, тĕштыра тасатнăшăн тата тырă турттарнăшăн çав ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр счетсем пама хушас.

4. Наркомзага, СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, СССР Наркомпищепромне, СССР Наркоммясомолпромне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, райисполкомсемпе парти райкомĕсене çапла тума хушас:

а) уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах государствăн хатĕрлев пункчĕсене тĕштырапа çу тумалли культурăсем турттарассине организацилемелле, çав ĕçе тума чĕре турттăм вăйĕпе автомашинăсем кирлĕ таран уйăрса хумалла, хатĕрлев планне кашни колхозпа совхоз пĕтĕмĕшпех тултариччен турттăм вăйне мĕнле те пулин урăх ĕçе куçарма чармалла;

б) колхозсемпе совхозсем тата хресчен хуçалăхĕсем государствăна чи лайăх тĕштырă, риç, хĕвелçаврăнăш тата çу тумалли пытти чи лайăх культурăсем пама тивĕçлĕ; тĕштырра, уйрăмах комбайнсем çапса кăларнă тырра тĕплĕн тасатассине, çавăн пекех тата нумай е йĕпе тĕштырра вăхăтра типĕтессине организацилемелле.

5. Çапла йĕрке тăвас: колхозсемпе совхозсем государствăна паракан тĕштырăн, çу тумалли культурăсен тата çĕрулмине совхозсен государствăран илнĕ ссудисене татнă çĕре, çавăн пекех тата колхозсен обязательнăй йĕркепе памалли, МТС ĕçленĕшĕн памалли иртнĕ çулхи парăмĕсене татнă çĕре каять.

Çавăн хыççăн вара колхозсем хатĕрлев пункчĕсене паракан тĕштырăсемпе çу тумалли культурăсене тата çĕрулмине колхозсен накладнойĕсенче кăтартса панă тăрăх обязательнăй поставкăсемпе натуроплата панă шута кĕртеççĕ, çакăнпа пĕрлех натуроплата тăленĕ шута государствăн çав район валли тунă хатĕрлев планĕнче кăтартса панă натуроплата виçинчен кая мар кĕртеççĕ.

МТС ĕçленешĕн натуроплата тĕрĕс шутласа хурассишĕн, колхозсен аллине счетсем вăхăтра парассишĕн тата колхозсем хăйсен аллине панă счетсем тăрăх тĕштырапа пытти тĕрлĕ культурăсене тĕрĕс парассишĕн МТС директорĕсем государство умĕнче ответлă пулса тăни çинчен, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнийĕсем вара—натуроплатăна, обязательнăй поставкăсен планне тултарнă пекех, пĕтĕмĕшпех шыраса илессишĕн ответлă пулса тăни çинчен асăрхаттарас.

6. Çапла йĕрке тăвас: колхозсем обязательнăй поставка шучĕпе тата МТС ĕçленешĕн (аван çапнисĕр пуçне) натуроплата тĕлес шутпа тĕштырă, хĕвелçаврăнăш тата пытти культурăсем панă чухне, çаван пекех тата колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсем обязательнăй поставкăна тултарнă чухне алла илнĕ обязательствăсенче тата МТС панă счетсенче кăтартнă пек культурăсем çеç памалла.

Тулă, рис, пăрса-ясмăк, хура тулă, вир тата яраш пек культурăсене пурне те алла панă обязательствăсенче тата МТС панă счетсенче кăтартнă чухлĕ парса татмалла. Тырă паракан килĕштернĕ тăрăх, пытти йышши тĕштырă культурăсем вырăнне кирек мĕнле урăх культурăсем те пама юрать. Çу тумалли культурăсем енĕпе, кăтартса панă эквивалент тăрăх, çу тумалли пĕр йышши культура вырăнне тепĕр йышши культура пама юрать.

7. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парас ĕçре колхозсемпе совхозсене пулăшма облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене çапла тума ирĕк парас:

а) область, край, республика территорийĕ çинчи мĕнпур предприятисемпе учрежденисен тата организацисен юсавлă автотранспортне, вĕсем мĕнле ведомствăсене пăхăнса тăнине тата мĕнле ĕç тунине пăхмасăр, 50 процент таран мобилизацилемелле, мобилизациленĕ кашни автомашинăна государствăн хатĕрлев пункчĕсене ялхуçалăх продукчĕсем турттарас тĕлĕшпе обязательнăй заданисем памалла, çав заданисене кашни тонна çурă туртакан автомашина пуçне 4.000 тонна-километр турттарассине шута илес тумалла.

Облисполкомсем, крайисполкомсем тата республикăсен совнаркомĕсем кăтартнă тăрăх мобилизацилекен автомашинăсен хуçисене — предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителĕсене çав мобилизациленĕ автомашинăсене уборка пуçланиччен 5 кун маларах ĕç вырăнне çитерме хушас;

б) лашасем тытакан предприятисемпе учрежденисене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парас тĕлĕшпе, лашана 50 тонна-километр турттармалла туса, обязательнăй йĕркепе задани памалла.

8. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, Центросоюза тата СССР Суту-илу Халăх Комиссариатне тырпул хатĕрлевĕ пуçланиччен Заготзернон пысăк çулсем çинчи пункчĕсенче лаша тăратмалли картишсем тата тырă паракансем валли чайнăйсем организацилеме хушас.

9. Колхозсемпе совхозсен тĕштыррине тата пытти продукцине çаратса пĕтерни питех те пысăк преступлени пулса тăрать тесе шутласа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ суд органĕсене колхозсемпе совхозсен тыррине тата пытти ялхуçалăх продукчĕсене вăрлакансене, çаратакансене хытă айăплама, 1932 çулхи августăн 7-мĕшĕнче «Обществăлла (социализмлă) харпăрлăха сыхласси çинчен кăларнă закон» тăрăх суд тăвасси таранах айăплама хушаççĕ.

V.
ЙĔТĔНПЕ КАНТĂР ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. Йĕтĕн-долгунеца тата кантăра пухса кĕнĕ çĕрте МТС-сен, совхозсемпе колхозсен йĕтĕн татмалли тата кантăр пухмалли машинисемпе пурнине те усă курмалла, çавăнпа та кашни МТС-па колхозрах йĕтĕнпе кантăра машинăпа тата алăпа пухса кĕмелли план туса хумалла, машинăпа пухма тикĕсрех участокселене суйласа, илмелле. Йĕтĕнпе кантăра пухнă чухне вĕсен тунисене пахалăх тăрăх сортласа пымалла.

2. Йĕтĕнпе кантăра çурăмĕсем тиссе çитнĕ хыççăн, пĕтĕмпе пухса пĕтересснине тăхтамасăрах, çийĕнчех çапмалла. Йĕтĕнпе кантăра пĕтĕмпех пухса кĕнĕ хыççăн вара 10 кунран кая юлмасăр çапса пĕтермелле.

Çапнă йĕтĕнпе кантăр çурăмĕсене пахалăхне кура сортласа уйăрмалла, вара çапнă хыççăнах, мĕнпур йĕтĕнпе кантăра çапса пĕтересснине кĕтмесĕрех, пултарма сарса пăрахмалла е шыва хутмалла.

3. Йĕтĕн-долгунеца сарса е хутса пултарас ĕçе сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр тата кантăр хутас ĕçе октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле.

4. Пуса татнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене пуса татнă чухне тунă ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама татнă пусан 30 процентне уйăрма колхозсене ирĕк парас. Ĕçкунĕсем тăрăх пуса валеçессине ăна пухса илнĕ хыççăн çийĕнчех туса иртермелле.

5. Йĕтĕнпе кантăр акса тăвакан пур колхозсенче те йĕтĕнпе кантăра типĕтме кирлĕ çĕнĕ суртйĕрсем (авăнсем) тумалла тата киввисене юсамалла. Çак ĕçсене йĕтĕнпе кантăра кĕркуннепе хĕллехи вăхăтсенче малтанлăха пĕтĕмпех тылласа хатĕрлеме кирлине шута илсе тумалла.

6. Йĕтĕнпе кантăра акса тăвакан колхозсенче йĕтĕнпе кантăра малтанлăха ĕçлесе тунă тата сортланă çĕрте нормăна тултарса тата ытлашшипех тултарса пыракан колхозниксене, ĕçкунĕсем çырса панисĕр пуçне, тĕштырă тата укçа çакăн чухлĕ хушса тӳлеме ирĕк парас:

а) ĕçлесе хатĕрленĕ тата государствăна панă йĕтĕнпе кантăр сӳсĕн кашни 10 килограммĕшĕн колхозниксене 2-шер килограмм тĕштырă тата 2-шер тенкĕ укçа памалла;

б) сортласа хатĕрленĕ, типĕтнĕ тата завода леçсе панă, анчах тылламан йĕтĕнпе кантăрăн кашни 100 килограммĕшĕн пĕрер килограмм тĕштырă тата пĕрер тенкĕ укçа памалла;

в) государствăна планран иртерсе сутнă пĕтĕм йĕтĕнпе кантăр сӳсĕшĕн тата тылламан йĕтĕнпе кантăршăн çав культурăсене малтанлăха ĕçлесе хатĕрленĕ çĕрте пулнă колхозниксене колхоз хушса илнĕ премирен 40 процентне валеçсе памалла.

Çӳлте кăтартнă пек тĕштырă тата укçа парса тӳлессине йĕтĕнпе кантăрăн ĕçлесе хатĕрленĕ продукцине государствăна панă хыççăн çийĕнчех туса иртертермелле.

7. СССР Наркомзагне тата Наркомтекстиле пур хатĕрлев пункчĕсене те тылламан кантăрпа йĕтĕнĕн, йĕтĕн-долгунеппа кантăр сӳсĕн промышленноçри сорчĕсен стандартлă образецĕсене (эталонĕсене) тăратма тата вĕсемпе йĕтĕнпе кантăр акакан колхозсене паллаштарма хушас.

8. Йĕтĕнпе кантăр акакан районсенчи партипе совет тата хатĕрлев органĕсене государствăна йĕтĕнпе кантăр сӳсне тата вăрринче вăхăтра парассине организацилеме, çак культурăсене государствăна панă плана кашни район, кашни колхоз тăрăх законпа кăтартнă сроксенче тултарма хушас.

(Çĕрмамăнĕпе сахăр кăшманĕ пухса кĕртесси тата хатĕрлесси çинчен каланан VI-мĕшпе VII-мĕш сыпăксене кĕртместпĕр. РЕД).

VIII.
ÇĔРУЛМИПЕ ПАХЧАÇИМĔÇ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. Çĕрулмипе пахчаçимĕçе кĕркуннехи сивĕсем пуçланиччен пĕтĕмпех пухса кĕртмелле. Çĕрулмипе пахчаçимĕçе пухса кĕртнипе пĕр вăхăтрах вĕсене государствăна памашкăн хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕçе организацилемелле. Çĕрулми каларнă хыççăн çĕрулми пулнă участокселене сӳремелле тата тепĕр хут сухалламалла та ун хыççăн тухнă çĕрулмине пухса илмелле.

2. Каларнă çĕрулмипе пухнă пахчаçимĕçе типĕтнĕ хыççăн кашни кунах хранилищĕсене турттармалла е уйрăх çăмăрпа сивĕ тивмелле мар туса вăхăтлăха пухса купаласа хумалла.

3. Вăрлăхлăх акнă пахчаçимĕç туниссене вăррисем пулса çитнĕ май суйласа илсе касассине тата вĕсене лупасайсенче типĕтессине анлăн организацилемелле, вырăнтан вырăна куçарнă чухне вăрлăха тăкăнма памалла мар.

4. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: вăрлăхлăх пахчаçимĕç лартса тăвас тĕлĕппе ĕçлекен колхозсем мĕнпур пахчаçимĕç вăрлăхне контрактаци договорĕсем тăрăх хатĕрлев пункчĕсене параççĕ пулсан, ăна обязательнăй йĕркепе пухнă пахчаçимĕçе çĕрулми пани вырăнне шутламалла, çаван чухне пĕр йышши пахчаçимĕç культурисене тепĕр йышши пахчаçимĕç вăрлăхĕпе улăштарма ирĕк пама юрать. Вăрлăхлăх пахчаçимĕç лартса тăвас тĕлĕппе ĕçлекен колхозсем выльăх апачĕн акнă тымар-çимĕçпе пытти тĕрлĕ пахчаçимĕç вăрлăхне хатĕрлев пункчĕсене контрактаци договорĕсем тăрăх параççĕ пулсан, ăна обязательнăй йĕркепе çĕрулмипе утă пани вырăнне шутламалла.

Пахчаçимĕçне, çĕрулмине тата утта пахчаçимĕç культурисен вăрлăхĕпе тата выльăх апачĕн акакан тымарçимĕç вăрлăхĕпе улăштарассине халĕ вăйра тăракан улăштару эквиваленчĕ тăрăх тумалла.

5. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: вăрлăх лартса тăвакан колхозсем «Сортсемовощь» склачĕсене панă пахчаçимĕç вăрлăхĕпе пăрса йышши культурăсен вăрлăхне, халĕ вăйра тăракан улăштару эквиваленчĕ тăрăх, государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă пани вырăнне шутламалла.

IX.
ТАБАКПА МАХОРКА ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. Махоркăн тунисене тата табакăн çулçисене ватăлса кайма памалла мар. вĕсене техникăна кирлĕ пек йĕркеллĕ, пиçсе çитнĕ вăхăтра пухса кĕмелле, табак çулçине вара, пулса çитнĕ май, сийĕн-сийĕн татса пухмалла.

2. Табакпа махоркăна ятарласа тунă сушилкăсенче типĕтмелле, ун пек сушилкăсем çителĕксĕр пулсан—хуçалăхри çак ĕçе тума майлаштарнă пытти сурт-сенче тата ансат сушилкăсенче типĕтмелле. Табакпа махоркăна пухнипе тата типĕтнипе пĕр вăхăтрах государствăна турттарса парассине организацилемелле.

Сушилкăсене тата табакпа махорка типĕтме майлаштарнă хуçалăхри тĕрлĕ суртйĕрсене августăн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтермелле.

3. Табакпа махорка пухса кĕртес ĕçе çак сроксенче вĕçлемелле тăвас:

а) **табака**—Казах ССР-ĕнче, Брянск, Сталинград тата Воронеж облаçĕсенче сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр;

махорăна—Казах ССР-ĕнче, Алтай, Красноярск тата Хабаровск крайĕсенче, Вологда, Иркутск, Кемерово, Курган, Молотов, Новосибирск, Свердловск, Томск, Тюмень тата Чита облаçĕсенче, Удмурт тата Бурят-Монгол АССР-ĕсенче сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр; ытти районсенче сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухса кĕмелле.

4. СССР Наркомтекстильне тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне табакпа махорка акакан районсене табакпа махоркăна тирсе çакма тата сыхса типĕтме вăхăтра кирлĕ таран шпагат кӳрсе пыма хушас.

X.
КОК-САГЫЗ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. Çапла йĕрке тăвас: кок-сагыз икĕ çул хушши çитĕнекен участокселене вăрри пулса çитнĕ пирки ăна пĕтĕмпех пухса кĕнĕ хыççăнах пур çĕрте те тымарне чавса кăлармалла. Кок-сагыз тымарне чавса кăларас, ăна тăпраран тасатас, тунинчен уйăрас тата государствăна пама хатĕрлев пункчĕсене леçес ĕçсене пурне те августăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле.

Кок-сагыз пĕр çул ӳсекен участокселене кок-сагыз тымарне октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр чавса кăлармалла. Украинăпа Белорусси ССР-ĕсен районĕсенче вара кок-сагыз тымарне октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне чавса кăларса пĕтермелле. Кок-сагыз тымарне государствăна памашкăн хатĕрлев пункчĕсене пур çĕрте те ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр турттарса тухмалла.

2. Кок-сагыза пухса кĕнĕ чухне тăкаланасран сыхлас тесе, çаксене тума хушас:

а) кок-сагыз тымарне сахалтан та 22—25 сантиметр тарăнăш чавса кăлармалла;

б) чавса кăларнă тымарсене пурне те тĕплĕн пухса илмелле, вара кок-сагыз тымарĕсене пухса илнĕ участоксене сухаласа тухмалла та, сухаланă хыççăн тухнă тымарсене тепĕр хут пухса илмелле.

3. Наркомрезинпрома хатĕрлев пункчĕсене тата колхозсем государствăна паракан кок-сагыз продукцине татти-сыпписĕр илсе тăмашкăн кирлĕ оборудование июлĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр йĕркелесе çитерме хушас.

4. Колхозсенче кăвчак паракан ӳсентăрансене пăхса çитĕнтерекен бригадăсемпе звеносенчи колхозниксене çав ӳсентăрансене пăхса çитĕнтернĕ, вăррине пухнă, тымарне чавса кăларнă вăхăтра колхозри пытти ĕçсене яма чарас.

XI.
НУМАЙ ÇУЛ ӲСЕКЕН КУРĂК ВĂРРИСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çĕрĕç, совет тата парти организацийĕсене çакăн çине çаврăнса пăхма кирлине асăрхаттараççĕ: нумай çул ӳсекен куракăсен вăрлăхлăх акнă участокĕсене вăхăтра пухса кĕни, нумай çул ӳсекен куракăсен пĕтĕм вăрлăхне пухса кĕрсе сыхласа усрани курăк акса тăвас ĕçе аталантарас тата тĕрĕс пусусаврăнăшне тытса пырас тĕлĕшре питĕ пысăк выран йышăнса тăраççĕ. Çакна ăнăçлă тăвас тесе, нумай çул ӳсекен куракăсем пулса çитме пуçланă таранах, райçĕрĕç лайăх тата МТС-сен агрономĕсене явăçтарса, клевер, люцерна, тимофеевка, житняк тата ытти куракăсем чăннипе мĕнле çитĕннине пăхса тухмалла та вăрлăхлăх участоксем уйăрса илмелле. Çав вăрлăхлăх уйăрса илнĕ участоксенчи курăка кашни колхозра, совхозра, кашни участокра хăçан пухса кĕмелли календарлă сроксем палăртса хумалла. Вăрлăхлăх уйăрса илнĕ участоксене вĕсене çулма пуçланă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр пухса кĕмелле, çулма пуçланă хыççăн 20 кунран кая юлмасăр çапса е шĕкĕлчесе пĕтермелле. Кашни колхозрах нумай çул ӳсекен куракăсен вăрлăхлăх участокĕсене курăк акмалли государство планĕпе çирĕплĕн килĕштерсе уйăрмалла, çав куракăсен вăрлăхлăх участокĕсене лайăх пăхса çитĕнтерессине организацилемелле, вĕсене утă валли çулса пăрахмалла мар.

2. Нумай çул ӳсекен курăк вăррине пиçсе çитнĕ вăхăтра тăкăнса çухаласран сыхлас тесе, колхоз правленийĕсене тата совхоз директорĕсене куракăн вăрлăхлăх участокĕсене вăхăтра пухса кĕмешкĕн çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ уйăрса пама хушас. Куракăн вăрлăхлăх хăварнă участокĕсене пухса кĕнĕ çĕрте ĕçлекен бригадăсĕмпе звеносене курăка пухнă тата вырăнтан вырăна куçарнă чухне унăн вăрлăхне сыхлама кирлĕ хатĕрсем—михĕсем, брезентсем, шăналăксем çителĕклĕ таран тупса памалла.

3. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, колхозсем государствăна тĕштырă памалли обязательство шучĕпе тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлес йĕркепе ударствăна курăк вăрлăхĕ параççĕ пулсан, ана çакăн пек эквивалентпа йышăнма хушас:

а) клеверăн, люцернăн, житнякăн, тимофеевкăн, сборная ежа текен курăкăн, райграсăн, тилĕ хӳрин, хĕрлĕ тĕслĕ вĕçкĕн куракăн тата çарансемпе выльăх кĕтмелли вырăнсенчи пытти куракăсен государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштыррăн 5 центнерĕшĕн йышăнмалла;

б) америка шуручĕн, улăхри вĕçкĕн курăкĕн тата сераделлăн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштыррăн 3 центнерĕшĕн йышăнмалла;

в) викăн, эспарцетăн, судан курăкĕн, могарăн, африка вирĕн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштыррăн 2 центнерĕшĕн йышăнмалла;

г) удăхри мятликăн, шурă полевицăн, швед клеверĕн, шурă клеверăн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштыррăн 6 центнерĕшĕн йышăнмалла.

Обязательнăй йĕркепе тĕштырă памалли плана тултарнă хыççăн, кивçен илнĕ вăрлăха парса татнă хыççăн, вăрлăх фончĕсем хывнă тата МТС ĕçĕсемшĕн тӳленĕ хыççăн государствăна клевер, люцерна, житняк, тимофеевка, эспарцет тата вика вăрлăхĕсем сутакан колхозсем Заготзерно пункчĕсенче çӳлте асăннă эквивалент тăрăх тĕштырă вăрлăхĕсем илме пултараççĕ. Колхозсене çав тĕштырă вăрлăхне хатĕрлев пункчĕсене укçа тӳленĕ хыççăн параççĕ, унсăр пуçне Заготзерно расхочĕсене витме кашни центнершăн 2-шер тенкĕ илсе юлаççĕ.

Вырăнти партипе совет организацийĕсене çапла тума хушас: нумай çул ӳсекен тата пĕр çул ӳсекен курăк вăрлăхне государствăна сутмалли плана тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн çав Постановление кăтартнă пек тӳлемелли йĕркесем çинчен колхоз правленийĕсене, колхозниксемпе хресчен хуçалăхĕсене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

4. Çапла йĕрке тăвас: курăк вăррине колхоза е хресчен хуçалăхне тепĕр çул акма кирлĕ таранах вăрлăх фондне хывни çинчен колхозсемпе хресчен хуçалăхĕсем райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ панă справкăна хатĕрлев органĕсене тăратнă пулсан çеç государствăна сутнă курăк вăрлăхне тĕштырă вырăнне шутламалла е уншăн тĕштырă памалла.

5. Вăрлăхлăх хăварнă курăк участокĕсене пухса кĕртнĕ тата çапнă çĕрте ĕçлекен комбайнерсене хавхалантарас тесе, вăрлăхлăх хăварнă курăкăн участокĕсене пухса кĕнĕ кашни гектарне 3 гектар тĕштырă пухса кĕни вырăнне шутламалла, тĕштырăпа тӳлекен премисене те çав хисеппех шутласа памалла.

XII.
ВĂРЛĂХ УЧАСТОКĔСЕНЧИ ТЫРПУЛА ПУХСА КĔРТЕС ЕНĔПЕ

1. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсене пĕр хут кăна мар асăрхаттарнă пулин те, колхозсемпе совхозсенче хăйсен вăрлăх участокĕсенче çитĕнтернĕ вăрлăхах çителĕклĕ пулмалла тăвас ĕçе нумай районсенче, колхозсемпе совхозсенче ку таранччен те йĕркелесе çитереймен-ха. Хăшпĕр колхозсемпе совхозсем вăрлăх акса çитĕнтерес тĕлĕшпе вăхăтра тăрăшмаççĕ, партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем вара, кĕретĕнех тĕрĕс мар çул çине тăрса, колхозсемпе совхозсенче вăрлăх ситменнине государство шучĕпе витсе пыма тăрăшаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсене, колхозсемпе совхозсене тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланиччен 20 кун малтан вăрлăхлăх акнă участоксене вырăна тухса тĕрĕслеме тата çав участоксем çинчи тырпула вăхăтра вырса илсе çапассине организацилеме хушаççĕ. Кашни колхозрах хывнă вăрлăха кладовщик аллине уйрăм акт тăрăх памалла; çав актра кашни культурăпа сорт тăрăх мĕнле пахалăхлă тата мĕн чухлĕ вăрлăх хывнине кăтартса памалла.

2. Колхозсемпе совхозсене, вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывиччен, вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула, вăрлăхлăх хăварнисĕр пуçне, мĕнле те пулин урăх çĕре ярса тăкаклама чарас. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула вырăнсăр салатнăшăн айăплă çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тăвас.

3. Уйрăм вырăнсенче çанталăка пула вăрлăх участокĕсем çинчен начар тырпул илнĕ пулсан, çавăнпа хăйсен вăрлăхĕсем çитеймеççĕ пулсан, ун пек колхозсемпе совхозсенче, кашни хутĕнчех райисполком уйрăмăн çирĕплетнĕ тăрăх, тырпул чи тухăçлăрах пулнă вырăнсенчен вăрлăх участокĕсем уйăрса илме ирĕк парас.

Вăрлăх участокĕсене çакăн пек уйăрса илессине тивĕçлĕ культурăсене пухма тытăниччен 10 кунран кая юлмасăр тумалла.

4. Çапла йĕрке тăвас: вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывнă хыççăн, колхозсемпе совхозсенче вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырă ытлашши юлать пулсан, çав ытлашши тырра колхозсемпе совхозсен хăйсен государство умĕнчи обязательствисене тултарма çĕре памалла, ун хыççăн тин вара çав тырăпа ытти çĕртĕ усă курма юрать.

5. Колхоз председателĕсене çапла тума хушас: сортлă мĕнпур вăрлăха, тĕрĕслесе пăхнă вăрлăх участокĕсем çинчен пухса кĕнĕскере тата государствăна пама тивĕçлĕскере, хатĕрлев пункчĕсене сортăн ĕнентерĕвĕсемпе пĕрле ăсатмалла.

6. Райсемхозсем Госсортфонда обязательнăй йĕркепе памалли планран тата натуроплатăран иртерсе панă сортлă вăрлăхăн кашни 40 кĕрепенкишĕн Заготзернон райсемхоза сывăхри складсенчен апат-çимĕçе каякан тĕштырă 55 кĕрепенке памалла.

7. МТС директорĕсене чи малтанах райсемхозăн тыррисене пухса кĕме хушас. Çак ĕçе тумашкăн райсемхоз уйăхрине чи лайăх тракторсемпе комбайнсем тата чи опытлăрах трактористсемпе комбайнерсем ямалла. Çаван пекех райсемхозсенче МТС-сен тырă тасатмалли машинисемпе вăрлăх тасатас ĕçе организацилемелле, çав машинăсене горючи тата сĕрмелли материалсем парса тăмалла.

8. Республикăсен совнаркомĕсене, облисполкомсемпе крайисполкомсене Госсортфондпа Госстрахфондăн хатĕрлев пункчĕсене сортлă вăрлăха хатĕрлесе сыхласа усрамашкăн кирлĕ складсем туписа памашăн, çаван пекех тата Госсортфондпа Госстрахфонда складсене юсама тата çĕнĕрен тума кирлĕ выранти стройматериалсемпе ĕç вăйĕ тупса парас тĕлĕшпе пулăшу памалла.

☆ ☆ ☆

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: халĕ мĕнпур партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсемшĕн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшĕн тата ялхуçалăхĕнчи специалистсемшĕн тырпула пĕр таккаламасăр, вăхăтра тата тĕплĕн пухса кĕме хатĕрленессинчен, çав ĕçсене лайăх туса пыттересснинчен тата кашни район, кашни колхозпа совхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене тултарассинчен пахăрах задача урăх çук, çакă вăл хуçалăхпа политикăлла чи пысăк задача пулса тăрать.

Парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çак Постановление ялсенчи парти тата комсомол организацийĕсен пухăвĕсенче, колхозниксен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисен, специалистсемпе служащисен пухăвĕсенче сӳтсе-явассине организацилеме хушас. Тырпула пăхса çитĕнтерес, ăна пухса кĕртме хатĕрленес тата ăнăçлă пухса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе çав пухусенче тивĕçлĕ решенисем йышăнмалла

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 136-мĕш номерĕнче.

Шупашкар пристанĕ Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансене кĕтсе илме хатĕрленет

Çак кунсенче Шупашкар пристанĕнчи ертсе пыракан работниксен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан паттăр воинсене кĕтсе илме хатĕрленесси çинчен сӳтсе-явăрĕ. Унта М. И. Калинин ялташăн статьине, Тури Атăл Пароходство начальникĕн приказне вуласа тата ăнлантарса патăмăр. Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансене лайăх кĕтсе илес тĕлĕшпе пристаньре мĕн-мĕн тумаллине тĕплĕн палăртрăмăр.

Пристань çинчи хĕрлĕ кĕтесре çар çыннисене кĕтсе илмелли пӳлĕм пулать. Унта ларса канма 10 диван, пукансем хатĕрленĕ. Пассажирсен вокзалĕн террраси çинче уçă сывлăшра ларса канма, каласса ларма дивансемпе тенкелсем пулаççĕ. Номерсенче командирсене выртса тăмашкăн уйрăм кроватьсем пулаççĕ. Вĕретнĕ шыв çителĕклĕ пултăр тесе, тепĕр «титан» лартма палăртнă.

Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансене кĕтсе илсе ăсатасси пассажирсен вокзалĕнче пулать. Вĕсен япалисене пĕр тӳлевсĕр упраса усрама, каякансене билет чи малтан пама хушнă.

Çак ĕçсене хăçан тата камăн тумалли çинчен пирĕн работниксем пурте пĕлсе тăраççĕ. Унсăр пуçне, паттăр воинсене кĕтсе илесси мĕн тери пысăк ĕç пулса тăни çинчен кашнинех ăнлантарса панă.

Халĕ ку тĕлĕшпе хатĕрленӳ ĕçĕсем пуçланчĕç ĕнтĕ. Фронтран таврăнакансене турттарса сӳреме «Газовец» трамвая хатĕрлеççĕ. Унăн чи лайăх пӳлĕмĕсене фронтовиксем валли уйăраççĕ. Киле таврăнакансем ыйтнине кура вăл трамвай Семеновкăра, Казеннăйĕнче, Кувшинкăра тата Сидельниковăра чарăнма пултарать. «20 лет Чувашии» пăрахут çинчи хĕрлĕ кĕтесе те çартан таврăнакансем валли уйăрнă.

Хĕрлĕ воинсене лайăх кĕтсе илме хатĕрленес ĕçре пире хула Совет исполкомĕ пулăшни те кирлĕ. Парикмахерскисен ĕçне лайăхлатмалла, Хĕрлĕ Çар çыннисен нушисене хăвăртрах тивĕстермелле тумалла. Атăл хĕрринче, пристань сывăхĕнче ĕçмелли шывсем сутассине йĕркелемелле, атă-пушмак тасатакансене тупмалла, тăхăнмалли япаласене юсакан мастерскойсем уçмалла.

Çак ĕçсене пурне те тусан эпир Хĕрлĕ Çартан таврăнакан паттăр воинсене лайăх та кăмăллă кĕтсе илме пултаратпăр.

В. МОШКИН,
Пристань начальникĕ.
М. ИВАНОВ,
Профком председателĕ.

Паттăр воинсене кĕтсе илме хатĕрленетпĕр.

ÇĔРПӲ, июлĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Ватăрах çынсене çартан киле ярасси çинчен йышăннă закон тухсанах районри ĕççынниссем киле таврăнакан паттăр воинсене кĕтсе илме хатĕрленме тытăнчĕç.

Çĕрпӳ станцинче вĕсем валли пӳлĕм уйăрнă. Унта çĕнĕ хаçат-журналсем килсе тăраççĕ, шашка-шахмăтсем туписа хатĕрленĕ. Воинсем валли буфет тата столовăй ĕçлет.

Июлĕн 12-мĕшĕнче райцентрта районри ял Советсемпе колхоз председателĕсен, парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу вăйсене киле çитсен пулăшу парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума палăртса хăварчĕ.

Çак кунсенче «Ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен йышăннă закона» колхозниксене ăнлантарса пама тата воинсене кĕтсе илме хатĕрленес ĕçе хăвăртлатма районри партине совет активĕнчен 27 çын ялсене туха кайрĕç.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРМАР. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан паттăр воинсене кĕтсе илме хатĕрленес ĕç районра пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Ку ыйтăва ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче тата райсовет исполкомĕнче пăхса тухнă.

Энĕшпуç разъездĕнче Хĕрлĕ Çар паттăрĕсене кĕтсе илме коммунистсенчен 4 çынна дежурнăй пулма уйăрнă. Воинсем валли çĕр каçма уйрăм пӳлĕм хатĕрленĕ. Агитаторсем докладсемпе лекцисем тума хатĕрленеççĕ. Леспромхоз столовăйĕнче воинсем валли вĕри апат пулать. Сывăхри колхозсенчен вокзал патне дежурнăй лашасем уйăрса янă.

Вăрмар станцинче Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсем поездсенчен ансан культурăллă канма виçĕ пӳлĕм уйăрнă. Вĕсене вокзалти столовăйĕнче вĕри апат çитереççĕ. Кашни кунах сывăхри колхозсенчен виçĕр лаша дежурствăра пулаççĕ.

Хĕрлĕ Çартан килекенсене лайăх кĕтсе илес тата вĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе çак кунсенче район центрĕнче парторганизаци секретарĕсен, колхозсемпе ял Совет председателĕсен тата предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

М. БОЙКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

5000 ТРАКТОР

Июлĕн 11-мĕшĕнче Алтайри трактор заводĕнчен конвейерĕ çинчен 5.000-мĕш трактор анă. Çакна пула заводра пушай сывлă митинг пулса иртнĕ. Трактор таваксем июнь уйăхĕнче планран иртерсе 30 трактор туса кăларнă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮЛĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Сĕртме туна	Тĕштырăсем сумлана	Пахча-çимĕç сумлана	Çĕрулми кулланă	Улăх ӳти çулна
Канаш	108,0	100,0	100,0	86,9	—
Советски	107,7	59,6	100,0	95,7	35,0
Вăрнар	106,5	90,8	100,0	100,0	33,8
Элĕк	103,7	79,6	100,0	76,6	22,1
Етĕрне	103,6	99,9	100,0	98,7	44,8
Чурачăк	103,1	92,2	94,7	98,2	52,8
Ишлей	102,7	87,2	100,0	94,3	49,1
Сĕнтĕрвăрри	101,3	57,3	60,9	75,8	28,2
Калинино	101,2	74,8	100,0	97,4	58,8
Çĕрпӳ	101,1	100,0	100,0	97,7	42,5
Муркаш	101,1	56,4	100,0	100,0	50,2
Октябрьски	100,9	60,8	100,0	93,1	5,8
Вăрмар	100,7	78,8	96,5	97,0	36,8
Елчĕк	100,6	94,7	100,0	95,0	74,4
Сĕнтĕр*)	100,1	68,4	62,0	62,6	—
Шăхасан*)	100,0	89,5	67,6	88,2	4,4
Шупашкар	100,0	64,7	95,7	97,5	38.6
Красноармейски*)	99,0	84,7	95,4	94,8	—
Куславкка	96,3	84,7	100,0	93,0	49,5
Çĕмĕрле	94,5	48,8	41,8	69.8	63,3
Хĕрлĕ Чутай	94,1	100,0	98,0	79,4	70,0
Йĕпреç	89,9	93,8	58,4	56,6	106,8
Тăвай	86,3	81,1	59,3	33,3	55,5
Первомайски*)	81,8	82,3	100,0	100,0	6,3
Чкаловски	74,6	87,0	86,0	85,1	74,0
Комсомольски	73,4	100,0	100,0	96,5	39,3
Шăмăршă*)	70,5	100,0	100,0	100,0	20,0
Улатăр*)	51,9	73,4	52,4	—	4,5
Пăрачкав	44,7	56,0	100,0	53,3	42,6
Кувакино	26,7	81,1	62,5	39,4	45,2

*) Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне илнĕ дан пайсем.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

РЕСПУБЛИКĂРИ ФИНАНС ОРГАНĔСЕН II-мĕш КВАРТАЛТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри финанс органĕсен 1945 çулхи II-мĕш кварталти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, çаксем малтан тухнине палăртнă:

Муркаш районĕнчи финанс пайĕ (финанс пайĕн заведующийĕ **Абрамов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Федоров** юлташ) II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 135,6 процент тултарнă. Муркаш районĕнчи финанс пайне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 15 пин тенкĕ преми пама йышăннă, вăл шутран 1.500 тенкине районри финанс пайĕн заведующине памалла тунă.

Çĕрпӳ районĕнчи финанс пайĕ (финанс пайĕн заведующийĕ **Петров** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Хабаров** юлташ) иртнĕ кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 121,3 процент тултарнă. Çĕрпӳ районĕнчи финанс пайне 10 пин тенкĕ преми пама йышăннă, вăл шутран 1000 тенкине районри финанс пайĕн заведующине пама палăртнă.

Октябрьски районри финанс пайĕ (финанс пайĕн заведующийĕ **Егоров** юлташ, райсовет исполком председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ **Леонтьев** юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 108,3 процент тултарнă. Октябрьски районри финанс пайне 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă, вăл шутран 800 тенкине районри финанс пайĕн заведующине памалла тунă.

Иртнĕ кварталта Чурачăк, Красноармейски, Шупашкар, Тăвай, Куславкка, Элĕк, Калинино, Вăрмар, Шăхасан районĕсенчи, Улатăр, Шупашкар тата Канаш хулисенчи финанс пайĕсем лайăх ĕçленипе палăртнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ АПАТÇИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕН, ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИЮНЬ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри хуласемпе районсенчи апатçимĕç комбиначĕсен, промысла коопераци артелĕсен тата инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

АПАТÇИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Кувакинăри апатçимĕç комбиначĕ (директорĕ **Т. Жоров** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Д. Ларионов** юлташ) июнь уйăхĕнче мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 158,8 процент тултарнă, продукци туса кăларассине май уйăхĕнчинчен 18 процент чухлĕ ӳстернĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Канашри апатçимĕç комбинатĕнчен илсе, Кувакинăри апатçимĕç комбинатне пама тата ăна 6 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Июнь уйăхĕнче Канаш хулинчи, Вăрнар, Муркаш, Вăрмар районĕсенчи апатçимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски тата Çĕмĕрле районĕсенчи апатçимĕç комбиначĕсем начар ĕçленине палăртнă

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Шупашкарти Куйбышев ячĕпе тăракан артель (правлени председателĕ **Михайлов** юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ **Аникин** юлташ) июнь уйăхĕнче мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 239 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти «Пекарь» артельтен илсе, Куйбышев ячĕпе тăракан артеле пама тата ăна 6 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артель (правлени председателĕ **Муравьев** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Манлашкин** юлташ) иртнĕ уйăхра мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 100,5 процент тултарнă. «Портной» артеле 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Шупашкарти вăрман промысла артелĕ (правлени председателĕ **Иванов** юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 106,6 процент тултарнă. Çак артеле 3 пин тенкĕ преми памалла тунă.

Июнь уйăхĕнче Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан, Канашри «Швейник», Шупашкарти «Пекарь», Канашри «Авангард» тата Пуянкассинчи Сталин ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Канашри «Красный воин» артель (правлени председателĕ **Корчагин** юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ **Кизилов** юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 103,6 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Йĕпреçри «Помощь» артельтен илсе, Канашри «Красный воин» артеле пама тата ăна 15 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Калинино районĕнчи Шĕнерти «20 лет Чувашии» артель (правлени председателĕ **Кудряшов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Валеев** юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 124 процент тултарнă. «20 лет Чувашии» артеле 6 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Июнь уйăхĕнче Улатăрти «Союз инвалидов», Чаканарти «Красный стрелок», Туканашри «Путь к коммунизму», Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» тата Çĕмĕрлери «Красный партизан» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Вăрнарти «Труд», Вутланти «Красный инвалид», «Пăрачкаври «Новый путь», Турайри «Рекорд», Кӳкеçри «Парижская Коммуна» артельсем начар ĕçленĕ.

Колхоз шкула пулăшать

КАЛИНИНО. Мăн Эльменти «Трактор» колхоз (председателĕ И. Васильев юлташ) ялти пуçламăш шкула яланах пулăшать.

Çитес вĕренӳ çулне хатĕрленсе, колхоз шкул йĕри-тавра карта тытса çавăрчĕ. Унтах шкул ачисем валли физкультура площадки тунă, тĕрлĕ йывăçсем лартса тухнă. Халĕ вăл йывăçсем пурте лайăх ӳсеççĕ. Колхозниксен вăйĕпе шкулăн вутă сарайĕ сине çĕнĕрен витнĕ. Малтанхи уйăхсенче хӳтма вутă çителĕклех хатĕрленĕ. Партăсемпе класри досканасене юсаса çăлана. Вĕренӳре кирлĕ ытти хатĕрсене те çителеклех туяннă. Шкул колхоз пулăшнипе çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе çитнĕ.

Ку шкулти учительсем те колхоза пулăшаççĕ. Орденоносец А. Васильева ялташ ертсе пыракан агитколлектив колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитацине массăллă ĕçе лайăх туса пырать. Яла çĕнĕ хаçат-журналсем илсе пырсанах вĕсене бригадăсемпе звеносене, фермăсене параççĕ. Унта хаçатра тухнă статьисене вуласа параççĕ, калаçусем иртереççĕ. Учительсем пулăшнипе бригадăсенче боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ.

Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту

Магнитогорскпа Кузнецк металлургĕсем Çĕнтерӳ ячĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пуçарса яма чĕнсе каланине пирĕн республикăри Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ завод коллективĕ хапăл туса кĕтсе илчĕ. Металлургсен чĕнĕвне сӳтсе-явас майпа заводри пур цехсемпе отделсенче те пухусем пулса иртнĕ. Чылай рабочисемпе мастерсем, цехсемпе отделсем, Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнса, татăклă обязательствăсем илнĕ. Завод 1945 çулхи производство программине срокчен тултарма, продукци туса кăларассине иртнĕ çулхинчен 11 процент чухлĕ ӳстерме пулнă. Хĕллеччен производство корпусĕсенчи строительство ĕçĕсене пĕтермо, пурăннăмалли çуртăрсене юсаса çитерме тата çĕнĕрен тума та палăртнă. Унсăр пуçне, подсобнăй хуçалăхри тырпулпа пахчаçимĕçе вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, пĕрлешӳллĕ апатлану валли çĕрулмипе пахчаçимĕç çителĕклĕ хатĕрлеме, фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инваличĕсене пĕрмаях пулăшса тăма обязательство илнĕ.

Завод коллективĕ Чăваш республикинчи мĕнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнма чĕнет.

* * *

Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пынă социализмлă ăмăртура Канашри вагонсем юсакан завод пысăк çитĕнӳ турĕ: II-мĕш кварталти производство программине срокчен тултарчĕ. Халĕ, Çĕнтерӳ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнса, завод коллективĕ çĕнĕ çитĕнӳ тăвассишĕн кĕрешет. Тимĕртăмăр шăратакан цехра ĕçлекенсем социализмлă ăмăртура малти вырăнта пулма сăмах панă. Механическипе тимĕрçĕ цехĕсен коллективĕсем ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса кăлармалли çулталăкри плана тата юр тасатакан машинăсем тумалли задание железнодорожниксен кунĕ тĕлне тултарма пулнă.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртес тесе, заводри чылай бригадăсемпе стахановецсем производствăллă вахтăна тăнă.

Юбилей ячĕпе пулнă спартакиада

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă ятпа пулнă спартакиада Шупашкарта 3 кун хушши пычĕ. Унта республикăри чи лайăх физкультурниксем 300 çынна яхăн хутшăнчĕç. Хуласенчи сборнăй командăсем пĕрремĕш группăна, районсенчи коллективсем иккĕмĕш группăна пайланса ăмăртрĕç.

Ăмăрту пуçланиччен спартакиада участникĕсем Шупашкар хулинчи физкультурниксемпе пĕрле столипăри физкультурниксен парадĕнче пулчĕç.

Пĕрремĕш группăри коллективсем хушшинче шведски эстафетăсем пуласа иртрĕç. Хĕрарăмсенчен эстафетăра Шупашкар команди (Маркова, спорт мастерĕ Гущина, Иванова тата Блинова юлташсем) финиш патне чи малтан чупса çитрĕ. Иккĕмĕш вырăна Етĕрне коллективĕ йышăнчĕ. Пысăк эстафетăра Шупашкар команди (Капитонов, Андреев, Карчевский, Солдатченко юлташсем) çăмăллăнах 1-мĕш вырăна йышăнчĕ. Иккĕмĕш вырăна Улатăр коллективĕ йышăнчĕ.

100 метра чупассипе арçынсенчен (хуласен группи) Шупашкар хулин представителĕсем Солдатченкопа Никитин мала тухрĕç. Хĕрарăмсенчен çав дистанцие Маркова (Шупашкар) мала тухрĕ.

3000 метра Капитонов (Шупашкар) 9 минут та 42 секундăра чупса тухрĕ. Бражников (Улатăр) 11 минут та 11 секундăра чупса тухса иккĕмĕш вырăна йышăнчĕ. Хĕрарăмсенчен 100 метра чупассипе Шупашкар физкультурницисем: спорт мастерĕ Гущина тата Вилюкова мала тухрĕç.

Диск ывăтассипе арçынсенчен Кремчугов (Улатăр) мала тухрĕ. Вăл 28,27 метр ывăтрĕ. Унтан Копашин (Çĕмĕрле) 23,33 метр, Андреев (Шупашкар) 22,17 метр ывăтрĕç. Хĕрарăмсенчен Маркова 26,69 метр, Вилюкова 22,65 метр, Орлова (Етĕрне) 22,53 метр ывăтрĕç. Улатăр хулин представителĕ Терехин граната ывăтассипе лайăх тĕслĕх кăтартрĕ. Вăл гранатăна 59,31 метра çити ывăтрĕ. Хĕрарăмсенчен Гущина 37,70 метр, Вилюкова 32,14 метр ывăтрĕç. Кремчугов ядро ывăтассипе те пĕрремĕш вырăн (10,44 метр) йышăнчĕ.

Шывра лодкăпа ишес енĕпе пĕрремĕш вырăна Шупашкар хулинчи команда, иккĕмĕш вырăна Çĕмĕрле хулинчи команда, виççĕмĕш вырăна Етĕрне хулинчи команда йышăнчĕ.

Арçынсем 25 километра, хĕрарăмсем 15 километра велосипедпа кайса ăмăртрĕç. Финиша чи малтан Ишлей районĕн представителĕсем Демидовпа Александров юлташсем тухрĕç. Вĕсем 25 километра 56 минутра чупса тухрĕç. Хĕрарăмсенчен 15 километра чи малтан Юдина (38 минут та 33 секундăра), унтан Веретенникова (Ишлей) чупса тухрĕç.

Пĕтĕмĕшпе илсен, хуласен группинчен пĕрремĕш вырăна Шупашкар коллективĕ, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Çĕмĕрлепе Етĕрне командисем, тăваттăмĕш вырăна Улатăр, пиллĕкмĕш вырăна Çĕнтервăрри командисем йышăнчĕç.

Районсен группинчен пĕрремĕш вырăна Ишлей районĕнчи коллектив, иккĕмĕш вырăна Улатăр, виççĕмĕш вырăна Çĕрпӳ районĕсенчи коллективсем йышăнчĕç.

И. В. Сталин тата В. М. Молотов Берлина çитнĕ

БЕРЛИН. июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 16-мĕшĕнче Берлина СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус И. В. Сталин тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов пырса çитнĕ.

Трумэнпа Черчилль Берлина килнĕ

ЛОНДОН. июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 15-мĕшĕнче хаçхине официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: президент Гарри Трумэн тата премьер-министр Уинстон Черчилль самолетпа Берлина вĕçсе çитнĕ.

Берлинра виçĕ аслă державăн пуçлăхĕсен конференцийĕ уçăлнă (Коммюнике)

Великобританин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн Правительствисен Пуçлăхĕсен Берлинри Конференцийĕ паян кăнтăрла иртсен 5 сехетре уçăлнă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президентне унăн икĕ юлташĕ Конференци ларăвĕсенче председатель пулса ертсе пыма чĕннĕ. Виçĕ Правительство Пуçлăхĕсем татса пама тивĕçлĕ ыйтусем пирки малтанлăха калаçса илнĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕ, Конференцин хатĕрленӳллĕ ĕçĕсене тăвас шутпа, тăтăшах тĕл пулса калаçаççĕ те сĕ ыйтăннă.

БЕРЛИН, 1945 çулхи июлĕн 17-мĕшĕ.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМĔН

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн Администраци комитечĕ Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине Парижра пухасси çинчен официальнăй пĕлтерӳ янă. Конференци сентябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 9-мĕшĕччен пымалла. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен Лондонра пуласа иртнĕ конференцийĕнче пулнисене пурне те чĕнӳ янă. Çав конференцие чĕнĕ пулин те, тĕрлĕ сăлтавсемпе унăн ĕçне хутшăнма пултарайман профсоюзсене тата малтан конференцине чĕнмесĕр хăварнă, анчах каярахпа Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцин комитетне йышăннă организацисене те чĕнӳ янă.

Администраци комитечĕ çапла йышăннă: конференцие пыма чĕнмен профсоюз организацийĕсем, хăйсене чĕнме ыйтса, конференцин Администраци комитечĕн секретариатне çыру яма пултараççĕ. Вăл ыйтусене Администраци комитечĕ пăхса тухать те, хăйĕн шухăшне каласа парса, конференцин комитетне ярать. Вăл комитет сентябрĕн 20-мĕшĕнче пухăнмалла.

Кунсăр пуçне, профсоюз организацийĕсем конференцие çак йĕркепе тăрăх делегатсем яма пултараççĕ: 5 миллион член шутланакан нациллĕ организацисем кашни 250.000 член пуçне пĕр делегат тата çав хисеп çурринчен иртерекен членсем пуçне пĕр делегат яма пултараççĕ. 125.000 членран сахалтарах шутланакан кирек епле организаци те пĕр делегат яма пултарать. 5 миллионран пуçласа 10 миллион члена çити шутланакан организацисем кашни 500.000 член пуçне пĕр делегат тата çавăн çурринчен иртекен членсем пуçне пĕр делегат яма пултараççĕ. 10 миллионран пуçласа 15 миллион члена çити шутланакан организацисем кашни миллион член пуçне пĕр делегат тата çавăн çурринчен иртекен членсем пуçне пĕр делегат ярасçĕ. 15 миллион членран ытларах шутланакан организацисем кашни 2 миллион член пуçне пĕр делегат тата çавăн çурринчен иртекен членсем пуçне пĕр делегат ярасçĕ. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери секретариачĕсенчен кашниех пĕрер делегат тата пĕрер делегат заместителĕ яма пултараççĕ.

ФРАНЦИЕ ÇĔНЕТЕС ТĔЛĔШПЕ ПУХНĂ ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАТСЕМ ЧĔНСЕ КАЛАНИ ТАТА ТУПА ТУНИ

ПАРИЖ, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Франци çĕнетес тĕлĕшпе пухнă Генеральнăй штатсен юлашки ларăвĕнче «1945 çулхи генеральнăй штатсем чĕнсе каланине тата тупа тунине» йышăннă. Вăл документра çапла калана:

«Франци çĕнетес тĕлĕшпе пухнă генеральнăй штатсем, пусмăрлăха çĕнтернĕ халăх наказенче палăртнă сĕнӳсене шута илсе, иртнĕ вăрçăн тĕп тĕллевĕ этемпе гражданинăн прависем пулнине тата çĕнтерӳ хыççăн пур çĕрте те çав правăсем çиеле тухмаллине шута илсе, çапла калаççĕ: никама пăхăнман учредительнăй пуху конституцин малтанхи пайĕнче правăсен декларацине чаплăн çырса хумалла. Çав правăсене пурнăçа кĕртессĕн халăхăн граждăнла тата çарти тăрăсисемшĕн, çаван пекех пур граждăнсемшĕн те обязательнă пулмалла.

Çав деклараци 1789 çулхи тата 1793 çулхи декларацисен тĕп принципĕсене çирĕплетсе памалла. Сăмахран, унта арçынне-хĕрарăмне пăхмасăр, расине, национальноçне, тĕн йĕркине пăхмасăр, пур çынсем те пĕртан пулнине, уйрăм çын ирĕклĕ пулнине, совесть ирĕклĕхне тата политикăллă ирĕклĕхе çирĕплетсе памалла. Халăх никама пăхăнманнине пула хăйĕн представителĕсене тӳрех суйлама пултарнă пирки, халăх представителĕсем ответлă правительство суйласа хурса ăна контроллесе пыма пултарнă пирки, пĕтĕмĕшле сасăласа палăртнă ирĕке нимĕн те чăрмантарса тăмалла мар.

Политикăллă демократи çинчен ниçĕсленсе тăракан çав правăсем çумне экономика, социальнăй тата пĕтĕм тĕнчери демократин тĕп прависем хутшăнаççĕ. Вĕсем çаксем: чуралăхран хăтарса нации тивĕçлĕхне çити çĕкленĕ ĕçĕн прави; хуларине ялти кашни ĕççыннине хăрушсăрлăх туса парса, вĕсен çемьери тата кашнин хăйĕн тивĕçлĕхне упрасси; халăх экономика тĕлĕшĕнчен никама та пăхăнманни; çак йĕрке уйрăм ушкăнсен, сăмахран, трестсен интересĕсем пуррипе килĕшме пултарайманскер, трестсен производство средствисемпе хатĕрĕсене, çаван пекех тупăшĕсене халăха тавăрса памалла; юлашкинчен, халăхсен никама пăхăнманлăх прави, вăл кашни гражданина тăван çĕршыва тата этем правине хӳтĕлеме хушать, кашни халăха—ирĕклĕхе юратакан пур халăхсемпе те пĕр шухăшлă пулма хушать, пур халăхсене те—хăйсен никама пăхăнманлăхне пĕтĕм тĕнчери пĕрлешсе тăракан халăхсен никама пăхăнманлăхне пăхăнтарса тăма хушать.

Çĕршыв никама пăхăнмасăр пурăнасси, çеçкеленсе ӳсесси тата аслă пуласси пĕтĕмĕшле патриотла шухăшпа сыхăннă мĕнпур французсенчен килет. Халăх хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе производствăна ӳстерме тăрăшса ĕçлесен çеç хăйĕн пурнăçне хăй аллине илме пултарать, тесе пĕлтереççĕ Генеральнăй штатсем. Кашни арçын, кашни хĕрарăм хăйĕн таса тивĕçне пурнăçа кĕртмелле, çак ĕçре чăрмантарса тăракансемпе кĕрешсе пымалла.

Энир, Генеральнăй штатсен делегачĕсем, Хирĕç тăрса кĕрешекен Халăх Совечĕн аллине хамăр полномочисене парса, пĕтĕм Франци халăхне творчествăллă ĕçе, Франци çĕклене кирлĕ чухлĕ тăрăшса ĕçлемешкĕн тăма чĕнсе тупа тăватпăр; республика йĕркине, тăван çĕршывран уйăрма май çукскере, упраса хăварас тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕ пулма Франци халăхне чĕнсе калатпăр; çĕршыв аслăлăхĕ пĕтĕмĕшле демократи аслăлăхне пулăшса тăрать текен шухăша пĕтĕм культурăллă тĕнчене ăнлантарса парса çав шухăш тавра пĕтĕçтерĕнĕр тесе тупа тăватпăр; ирĕклĕхшĕн çапăçса кĕрешнĕ идеалсене яланах пăхăнса тăма тупа тăватпăр .

1945 çулхи июлĕн 13-мĕшĕнче Парижра, Шайо дворецĕнче çырса хатĕрленĕ».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: американецсен карапсем çинчи самолечĕсем çаплах Японин çурçĕрти пайне пыра-пыра тапăннă, вĕсем пысăк сиен кӳнĕ. Япони вăйăсем хирĕç тăман. Америка карапĕсем Хонсю утравĕн çурçĕр пайĕн хĕвелтухăç çыранне пенĕ чухне 1000 тонна снаряд ытла персе янă. Вăйлă пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Авианосецсем çинче вырнаçса тăракан пĕр пин ытла самолет Хоккайдо утравĕпе Хонсю утравĕн çурçĕр пайне тапăннă. Малтанхи даннăйсем тăрăх, çыран сывăхĕнче Японин 9 пысăк суднине тата 6 пĕчĕк суднине шыва путарнă, 9 пысăк суднипе 30 пĕчĕк суднине сиенленĕ.

ВАШИНГТОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: Мариан утравĕсем çинче вырнаçса тăракан «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем, йышлăн вĕçсе кайса, Хонсю утравĕ çинчи Кудамацури предприятисене тапăннă.

ВИНСОНА АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ФИНАНС МИНИСТРĔ ПУЛМА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Сурт çапла пĕлтернĕ: президент Трумэн çар производстви ĕçĕсене пăхса тăракан управленин пуçлăхне Винсона Моргентау вырăнне финанс министрĕ пулма лартма йышăннине ырлама паян сената тăратмалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕССĔ: г. Чебоксары, ул. Белоусовского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00168 Типография ... Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. л. Тираж 16.000